25-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1942
АВГУСТ
4
ЫТЛАРИКУН
180 (6115) №

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Хурçă пек çирĕп дисциплина уборка ăнăçлăхне татса парать

Колхозсен уйхирĕсенче хĕрӳ ĕç пырать. Республикăн пур районĕсенче те колхозсем кĕрхи тырăсене вырма тытăннă. Тырăсене вырса пухас ĕçĕн малтанхи кунĕсенчех чылай районсенчи колхозсем ĕçе пысăк хăвăртлăхпа тата пахалăхпа туса пыма тытăнчĕç, тырăсене жнейкăсемпе, кĕреплеллĕ çавасемпе тата çурласемпе вырса, ĕçĕн тухăçлăхне вăйлăн ӳстерсе пыраççĕ. Елчĕк районĕнчи пур колхозсем те кĕрсех ыраш выраççĕ. Ленин ячĕпе тăракан колхозăн машиновечĕ, отечественнăй вăрçăн инваличĕ Афанасьев юлташ малтанхи кунах жнейкăпа 7 гектар ыраш вырнă, колхозăн 9-мĕш бригадинчи комсомолецсем Никонова юлташсем жнейкăсемпе сменăра 6-шар гектар вырса пыраççĕ. Районра малта пыракан колхозсем паянхи куна ыраша çурри ытла вырнă та ĕнтĕ. Куславкка районĕнчи «Коммунист» колхоз членĕсем пурте уборкăра. Вĕсем ĕçе хĕвел тухиччен тухаççĕ те мĕн тĕттĕм пуличчен организованно ĕçлеççĕ.

Тырăсене ăнăçлăн пухса кĕртесси, ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлес плана вăхăтра пурнăçласси халĕ партипе совет организацисен, колхозсемпе МТС-сен тĕп задачи пулса тăрать. Ку задачăна партипе правительство хушнă пек чыслăн та ăнăçлăн пурнăçлама колхозсемпе МТС-сен ĕçĕнче хурçă пек çирĕп дисциплина пулни кирлĕ. Колхозсенче, МТС бригадисенче ĕç дисциплини халĕ никăçанхи пек мар çирĕп пулмалла. Ĕçе организованно, çирĕп дисциплинăпа туса пырсан çеç вăрçă условийĕсенчи пысăк йывăрлăхсене çĕнтерсе, пуян тырпула эпир кĕске срокра тата пĕр тăккаламасăр пухса кĕртме пултаратпăр. Кашни пĕр тырă — фашистсене тĕп тунă çĕре кайакан вăй. Уйсенче, итемсем çинче пĕр пĕрчĕ тырă та тăкăнса ан юлтăр. Çакăншăн кĕрешмелле пирĕн.

Партипе правительство колхозниксемпе колхозницăсене уборка вăхăтĕнче пысăк тухăçлăхпа ĕçлеме пур майсене те туса панă. Ĕç нормине ирттерсе тултарса пыракансем, ĕçе стахановла хăвăртлăхпа туса пыракан колхозницăсем ĕçшĕн хушса илеççĕ. Уйрăм участоксенче тырпул тухăçлăхне ӳстерессишĕн тимлĕ ĕçлекен звеносемпе бригадăсене тырпул тухăçне планпа пăхниччен нумайрах туса илнĕшĕн ĕçшĕн хушса тӳлеççĕ.

Ăнăçлă пулнă тырăсене хăвăрт тата тăккаламасăр пухса кĕртессишĕн, государство валли ялхуçалăх продукчĕсене ытларах хатĕрлессишĕн тивĕçлипе кĕрешекен колхозсем кăçал уборкăра паха тĕслĕхсем кăтартаççĕ. Çĕмĕрле районĕнчи «Красноармеец», Ворошилов ячĕпе тăракан колхозсенче мĕнпур пек колхозниксем пурте тырă выраççĕ. Кунта ĕçе тухман колхозниксем çук, звеносемпе бригадăсем иртен пуçласа каçченех уйра тимлĕн ĕçлеççĕ. Канаш районĕнчи Доронин ячĕпе тăракан колхоз ыраш вырма августăн 1-мĕшĕнче тухнă. Ĕçе малтанхи кунах 299 çын тухса пысăк хастарлăхпа тырă вырнă. Колхозница В. Волкова малтанхи кунах 305 кĕлте çыхнă, 2,39 ĕçкунĕ ĕçлесе илнĕ, А. Михайлова колхозница 2,34 ĕç-кунĕ ĕçлесе илнĕ. Первомайски районри «Красный флот» колхоз колхозницисем ыраша кĕреплеллĕ çавасемпе ăнăçлăн вырса пыраççĕ. Пĕр кун хушшинче кĕреплеллĕ çавасемпе Нестерова юлташ 0,42 гектар, К. Петрова—0,41 гектар, В. Михайлова юлташ — 0,37 гектар, Лукьянова юлташ 0,35 гектар ыраш вырнă.

Отечественнăй вăрçă фрончĕсенче хаяр çапăçусем пыраççĕ. Геройла Хĕрлĕ Çар вăрă-хуравсене вăйлăн пыра-пыра çапать, вĕсем тапăннине сире-сире пăрахать. Çак вăхăтра пирĕн колхозсенче, пирĕн кулленхи ĕçре çирĕп дисциплина пулмалла. Кашни ĕçлеме пултаракан çын — уборкăна! Тырăсене пухса кĕртес ĕçре пĕтĕм вăйран ĕçлени — фронта вăйлăн пулăшни пулать. Хĕрӳ ĕç вăхăтĕнче ĕçрен пăрăнса çӳрени — тăшмана пулăшни пулать.

Çакна хăшпĕр колхозсен руководителĕсем тата уйрăм колхозниксем халĕ те ăнланса илеймеççĕ-ха. Вĕсем халĕ те кая юлнă шухăшсен тыткăнĕнчен хăтăлайман. Çакна уйрăмах Канаш районĕнчи хăшпĕр колхозсем пирки калас пулать. Кунта машинăсемпе кĕреплеллĕ çавасене ĕçре тивĕçлĕ пак паманнине пула тырă вырас ĕç юлса пырать. Крупская ячĕпе тăракан колхоз тырă вырма июлĕн 31-мĕшĕнчех тухнă, анчах 3—4 кун хушшинче те 17 гектара яхăн çеç вырнă. «Коминтерн» колхозра 285 çынран тырă вырма 158 çын çеç тухать.

Тырăсене вырас ĕçе Сĕнтĕр, Шупашкар районĕсенчи колхозсем те чылайĕшĕ вăхăтра тухмарĕç. Сĕнтĕр районĕнчи Чкалов, Фрунзе ячĕпе тăракан, «Крестьянин», «Красное знамя» колхозсем ялхуçалăх машинисене юсаса ĕçе яман. Куславкка районĕнчи «Коммунар» колхозра 300 колхозникрен 133 çын кăна куллен ĕçе тухать.

Хăшпĕр колхозсем халĕ уборкăра кая юлса пыни кайран пĕтĕм районумне пысăк йывăрлăхсем кăларса тăратма пултарать. Малта ĕçсем татах та нумай. Тырра çапса пуçтарса кĕртес пулать. Кăçал çĕмелсене уйран вăхăтра турттарса кĕменни, авăн çапас ĕçе йĕпе-сапаллă вăхăта хăварни — преступлени пулать. Çавăнпа та паянхи ĕçе паянах тăвас пулать. Кашни çыннăн колхозра халĕ пĕтĕм вăйран ĕçлес пулать. Уборкăра ĕçĕн хăвăртлăхне кунран-кун ӳстерсе пымалла. Паян ĕнерхинчен лайăхрах ĕçлемелле, ыран ĕçре паянхинчен те пысăкрах çитĕнӳ тумалла.

Ĕçрен пăрăнса çӳрекен çынсене колхозниксен анлă масси умĕнче критикăламалла. Уборка вăхăтĕнче колхозсемпе МТС-сенче хурçă пек çирĕп дисциплина тумалла. Вăл уборкăри ĕçсен ăнăçлăхне татса парать. Коммунистсемпе комсомолецсен, ялсенчи учительсемпе учительницăсен, МТС работникĕсемпе райçĕрĕç пайĕнче ĕçлекенсен колхозниксен массине 1942 çулти тырпулсене пухса кĕртес ĕçре, ялхуçалăх продукчĕсене хатĕрлес ĕçре çĕнĕрен те çĕнĕ ӳсĕмсем тума хавхалантарса пымалла.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Августăн 2-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Августăн 2-мĕшĕнче пирĕн войскăсем противника хирĕç **Клетская, Цымлянская, Кущевская** тата **Сальск** районĕсенче хаяррăн çапăçнă.

Фронтăн ытти участокĕсенче паллă улшăнусемех пулман.

Иртнĕ эрнере, июлĕн 26-мĕшпе августăн 1-мĕш хушшинче, сывлăшри çапăçусенче, противникăн аэродромĕсем çинче тата зенитнăй артиллерирен персе нимĕçсен 286 самолетне пĕтерсе тăкнă. Çав вăхăт хушшинче пирĕн 201 самолет пĕтнĕ.

* * *

Августăн 1-мĕшĕнче пирĕн авиаци чаçĕсем фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче нимĕçсен 38 танкне, войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 300 автомашинине, боеприпассем тиенĕ 40 лавне, горючи тултарнă 3 автоцистернине пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, боеприпассен складне сирпĕнтерсе янă, полевой тата зенитнăй артиллерин 11 батарейине пусарса лартнă, противникăн чугунçул çинчи икĕ составне çĕмĕрсе тăкнă, 6 пин тонна водоизмещениллĕ транспортне путарнă тата унăн пехотине 4 батальона çити сапаласа янă, пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Клетская районĕнче пирĕн войскăсем нимĕçсен атакисене сире-сире пăрахаççĕ тата нимĕçсене пыра-пыра çапса вĕсене çынсемпе техника тĕлĕшĕнчен пысăк çухатусем тӳстереççĕ. Н-ски танковăй часть противникăн малалла кĕрсе кайнă танкĕсемпе пехотине сирсе пăрахнă, нимĕçсен 7 танкне, 16 противотанковăй орудине пĕтерсе тăкнă тата гитлеровецсене 400 çынран кая мар вĕлерсе пĕтернĕ. Клетскаяран кăнтăралларахри вырăнта нимĕçсен отрячĕсем пирĕн пĕр чаçăн флангĕсем ăшне кĕрсе кайнă пулнă. Анчах та пирĕн боецсем шикленсе ӳкмен, тăшманăн атакисене сире-сире пынă. Ятарласа уйăрнă подразделенисем пирĕн оборона ăшне кĕрсе кайнă гитлеровецсене пĕтерсе тăкнă. Çав участокра пĕр кун хушшинче нимĕçсен 900 салтакĕпе офицерĕ ытла вилнĕ е аманнă. Çапăçу хирĕнче противникăн çĕмрĕк 8 танкĕ тата çунса кайнă 11 танкĕ вырта юлнă.

* * *

Цымлянская районĕнче пирĕн войскăсем нимĕçсен фашистла войскисен Донăн кăнтăр енчи çыранне каçнă группировкине хирĕç çапăçнă. Пĕр участокра противникăн пехоти, танксем пулăшса пынипе, пирĕн позицисече атакăланă. Пирĕн боецсем гитлеровецсен çав атакине сирсе пăрахнă. Çав çапăçура нимĕçсен 6 танк тата 300 салтакпа офицера çити пĕтнĕ.

* * *

Кущевская районĕнче тăшманăн танкĕсемпе пехотин темиçе хаяр атакисене сирсе пăрахнă. Нимĕçсен 8 танк, 11 оруди, 23 пулемет, 17 автомашина тата 700 салтакпа офицера çити пĕтнĕ. Дон казакĕсен пĕр чаçĕ нимĕçсен колонни çине сасартăк пырса тапăнса, 300 гитлеровеца яхăн касса тăкнă. Пирĕн авиаци чылай çĕрте противникăн боевой йĕркисем çине тата унăн каçсисем çине ăнăçлăн вĕçсе пырса тапăннă. Сальск районĕнче пирĕн артиллерипе минометсем нимĕçсен 12 танкне пĕтерсе тăкнă. Пирĕн зенитнăй артиллери противникăн пикировка тăвакан 3 бомбардировщикне персе ӳкернĕ.

* * *

Воронеж районĕнче противника хирĕç уйрăм тытăçусем пула-пула иртнĕ. Донăн хĕвеланăç енче çапăçакан пирĕн пĕр чаça венгерсен бригади атакăланă. Хаяр çапăçу пуçланса кайнă. Противник виçĕ хут атакăланă, анчах та, пысăк çухатусем тӳссе, каялла чакнă. Тепĕр участокра энски чаçри боецсем противникăн икĕ атакине сирсе пăрахнă, гитлеровецсене пĕр батальон ытла вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Ленинград облаçĕнчи партизансен пĕрлешнĕ 6 отрячĕ июль уйăхĕн 25 кунĕ хушшинче 2 пин гитлеровеца ытла вĕлерсе пĕтернĕ. Партизансем нимĕçсен 4 танкне, грузсем тиенĕ 24 лавне пĕтерсе тăкнă, 5 складне сирпĕнтернĕ, 15 поездне ӳпĕнтерсе янă. Войскăсемпе çар грузĕсем тиенĕ 400 ытла вагонпа платформа çĕмĕрĕлнĕ.

* * *

Нимĕçсен 25-мĕш танковăй дивизийĕнчен хăйĕн ирĕкĕпе тыткăна парăннă салтак Франц К. çапла каласа панă: «Мана 1942-мĕш çулти январь уйăхĕнче çара илчĕç те Париж хулине, строительнăй батальона ячĕç. Май уйăхĕнче пире 39-мĕш номерлĕ уйрăм команда туса уйăрчĕç те секретлă строительствăна ячĕç. Малтанах эпир хамăр хăш вырăнта ĕçленине те пĕлмен. Вăл районра вуншар машина пĕр вĕçĕмех çӳретчĕç. Пире час-часах пĕр вырăнтан тепĕр вырăна куçарса çӳререç. Çавтери пысăк строительство пынă пек туйăнатчĕ. Чăннипе илсен, тума тытăннă объектсем те вĕçленмесĕрех юлчĕç. Юлашки вăхăтра эпир орудисемпе самолетсен макечĕсене вырăнаçтарса тата суя дотсемпе ытти суя сооруженисем туса пурăнтăмăр. Июнь уйăхĕн варринче пирĕн строительнăй командăна тата ытти строительнăй командăсене те нумайĕшне урăхла йĕркелесе хурса Хĕвелтухăç фронтне ячĕç».

* * *

Нимĕçсен оккупациллĕ влаçĕсем Сен-Малора (Франция) унта пурăнакан 500 çынна Германие ирĕксĕрлесе ĕçе яма пухнă. Вокзалра Французсем хăйсене киле яма ыйтнă. Çав вырăна пырса çитнĕ нимĕçсен Ландвераи отрядне, урăхла каласан, 45 çултан иртнĕ ополченецсенчен тăракан отрядне французсем чулсемпе вăйлăн персе кĕтсе илнĕ. 11 гитлеровеца вĕлернĕ тата амантнă. Француз рабочийĕсем тарнă.

Августăн 3-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Августăн 3-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем противника хирĕç **Клетская, Цымлянская, Кущевская** тата **Сальск** районĕсенче çапăçнă.

Фронтăн ытти участокĕсенче нимĕнле улшăну та пулман.

* * *

Клетская районĕнче темиçе участокра нимĕçсен пехотипе танкĕсем атакăсем тунă. Атакăлакан чаçсене авиаци пулăшса пынă, вăл совет войскисем вырăнаçнă вырăна нумай бомбăсем пăрахнă. Пирĕн чаçсем гитлеровецсем хĕснине çирĕппĕн чарса тăнă, вĕсене хăйсен малтанхи рубежĕсем патне хăваласа янă. Пирĕн пĕр часть противника хирĕç пынă çапăçусенче пĕр кун хушшинче 30 оруди, минометсен 3 батарейине тата нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсене 2.000 çынна çити пĕтерсе тăкнă.

Н-ски полкри артиллеристсемпе бронебойщиксем нимĕçсен 6 танкне персе çĕмĕрнĕ. Пирĕн старши лейтенант Шевалов командир пулса ертсе пыракан 5 истребитель, противникăн 6 истребительне хирĕç çапăçса, нимĕçсен 2 самолетне персе ӳкернĕ.

* * *

Цымлянская районĕнче противник пехотăн 2 батальонне çити вăйпа пирĕн пĕр подразделение атакăланă. Совет боецĕсем нимĕçсен атакине сирсе янă. Çапăçу хирĕнче 11 çĕмĕрĕлнĕ танк тата 200 гитлеровец ытла выртса юлнă. Тепĕр участокра тинĕç пехотин подразделенийĕ, противника хирĕç хаяррăн çапăçса, унăн 8 танкне стройран кăларнă тата 700 салакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Кущевская тата Сальск районĕсенче пирĕн войскăсем противника хирĕç оборонăллă йывăр çапăçусем туса пынă. Дон çинчи тата Кубаньри казаксен чаçĕсем, темиçе хут ăнăçлăн контратака туса, 1.500 гитлеровеца ытла пĕтерсе тăкнă. Пирĕн пикировка тăвакан бомбардировщиксемпе инçене вĕçекен бомбардировщиксем противникăн фронт патне çывăхарса пыракан танковăй тата моторизованнăй колоннисем çине ăнăçлăн вĕçе-вĕçе пырса тапăннă. Бомбăсем нимĕçсен чаçĕсене пысăк сиен кӳнĕ.

* * *

Ленинград фронтĕнче разведчиксен ĕçĕсем пулса пынă. Пирĕн артиллери противникăн 6 станковăй пулеметне, темиçе орудине пĕтерсе тăкнă тата противникăн йывăçпа çĕртен тунă 18 огневой точкипе блиндажĕсене çĕмĕрнĕ. Нимĕçсен 200 салтакпа офицер ытла пĕтнĕ.

* * *

Рябинкин юлташ командир пулса ертсе пыракан чаçри 126 снайпер вăрçă пуçланнăранпа 2.000 гитлеровеца яхăн пĕтерсе тăкнă. Çав чаçри чылай снайперсем — Остудин, Вдовиченко, Салтыков, Ющенко, Чистяков, Говорухин, Капицын — кашнийĕ çĕршер нимĕçрен ытларах вĕлернĕ. Снайпер Николаев юлташ нимĕçсен 187 салтакĕпе офицерне вĕлернĕ.

* * *

Çурçĕр-Хĕвеланăç фронтĕнче тăшманăн тылĕнче кĕрешекен партизансен В. юлташ командир пулса ертсе пыракан отрячĕ пĕр уйăх хушшинче 1.000 оккупанта ытла пĕтерсе тăкнă, нимĕçсен 6 танкне персе çĕмĕрнĕ тата вĕсем пыракан тĕле минăсем хурса сирпĕнтерсе янă, 13 автомашина пĕтерсе тăкнă тата противникăн 5 çар эшелонне ӳпĕнтерсе янă.

* * *

Венгерсен 35-мĕш пехотнăй полкĕнчен тыткăна лекнĕ салтак Миклош Б. çапла каласа панă: «Вырăссене хирĕç пынă пĕрремĕш çапăçурах пирĕн батальона аркатса тăкрĕç. Пĕр сехет хушшинче пирĕн 200 çынна яхăн пĕтрĕ. Вырăссен танкĕсем пирĕн оборонăна татса кĕрсе, противотанковăй орудисене таптаса çĕмĕрсе пĕтерчĕç те, вара хăйсен çулĕ çинче мĕн тĕл пулнине пурне те çĕмĕрсе пыма тытăнчĕç. Салтаксемпе офицерсем тарса саланчĕç. Çав çапăçура батальонăн командирне Шандор Минянски подполковника вĕлерчĕç. Эпĕ салтаксен пĕр ушкăнĕпе пĕрле тыткăна парăнтăм».

* * *

Голланди патриочĕсем нимĕçсен фашистла оккупанчĕсене хирĕç вăйлăрах та вăйлăрах кĕрешсе пыраççĕ. Юлашки икĕ уйăх хушшинче вĕсем 40 товарнăй поезда пĕтерсе тăкнă тата нимĕçсен 5 самолетне çунтарса янă. Гарлем çывăхĕнче торпедăсемпе боеприпассем усракан склада сирпĕнтерсе янă. Пĕр товарнăй станцинче нимĕçсен продовольстви склачĕ тата аммуници тиенĕ 3 вагон çунса кайнă.

Колхозниксемпе колхозницăсем! Тырпулсене пухса кĕнĕ çĕрте ир- ирех пуçласа сĕм тĕттĕм пуличчен ĕçлĕр!

Çĕнĕ тырра çапма тытăннă

КУСЛАВККА, августăн 3-мĕш. (**Телефонпа**). Районри колхозсенче ыраш вырас ĕç массăллăн пуçланчĕ. Уйрăм участоксене суйласа, паянхи куна районĕпе 400 гектар çинчи ыраша вырса çĕмеле хывнă. Районри чылай колхозсем тырра массăллăн вырма организованно тухрĕç. «Коммунист», «Труд», «Канаш» колхозсенче большевикла йĕркелĕх тунă, колхозниксемпе колхозницăсем пурте пысăк хастарлăхпа ĕçлеççĕ. Малтанхи кунсенчех тырра машинăсемпе вырма тытăнса, ку колхозсем çĕршер гектара яхăн вырнă ĕнтĕ.

«Спартак», «Звезда» колхозсенче кĕреплеллĕ çавасемпе анлăн выраççĕ. «Звезда» колхозра кашни бригадăрах 3—5-шер кĕреплеллĕ çава иртен пуçласа каçченех ыраш вырать. «16-й партсъезд», «Канаш», «Большевик» колхозсем паян малтанхи хут çĕнĕ тырра çапма тытăнчĕç.

Агитациллĕ-массăллă ĕç чылай колхозсенче анлăн сарăлса пырать. Колхозниксем хушшинче ăнлантарулла ĕçе лайăх йĕркеленине пула «Красноармеец», «Новая жизнь» колхозсенчи колхозниксемпе колхозницăсем ĕç тухăçлăхне кунран кун хăпартса пыраççĕ, ку колхозсенче тырă вырас ĕçе активлăн хутшăнман колхозниксем çук.

Анчах та тырă вырас ĕçĕн хăвăртлăхĕ тивĕçлипех ӳссе пымасть-ха. «Искра», «Красная заря», «Коммунар», «Путь к социализму» колхозсен руководителĕсем колхозниксен пĕтĕм массине ĕçе мобилизацилемен. «Путь к социализму» колхоз уборкăна пĕр кун кая юлса тухрĕ.

«Коммунар» колхозăн ĕçĕнче те пысăк çитменлĕх пур. Колхозниксем ĕçе тухнине бригадирсем шута илсе пымаççĕ, кам мĕншĕн тухманнине пĕлмеççĕ, мĕнле ĕçленине тĕрĕс хак памаççĕ. Çавна пула кунта хăшпĕр колхозниксем ĕçре хăйсене сӳрĕккĕн тытаççĕ. Ĕнер, тĕслĕхрен, ĕçлеме тивĕçлĕ 300 çынран 133 колхозник çеç ĕçе тухнă.

Н. ЛЬВОВ,
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

Машинăсемпе тата кĕреплеллĕ çавасемпе вырас ĕçе хакламаççĕ

Районри колхозсем виççĕмĕш кун ĕнтĕ ыраш выраççĕ. Чылай колхозсен хирĕсенче ыраш пĕтĕмпех пулса çитнĕ. Ăна машинăсемпе, кĕреплеллĕ çавасемпе анлăн вырас пулать. Анчах «Броневик», «Коминтерн», «Мотор», «Искра» колхозсен председателĕсем халĕ те кая юлнă шухăшсен тыткăнĕнчен хăтăлайман-ха. Вĕсем «уборкăн малтанхи кунĕсенче ыраша çурлапа çеç вырмалла, жнейкăсемпе, лобогрейкăсемпе тата кĕреплеллĕ çавасемпе вырма иртерехха», тесе пурăнаççĕ. Ку тĕлĕшпе Крупская ячĕпе тăракан колхоз председателĕ Мартынов юлташ та йăнăш тăвать. Колхоз ыраш вырма июлĕн 31-мĕшĕнче тухнă. Анчах машинăсемпе çавасем халĕ те ĕççĕр тăраççĕ.

Райçĕрĕç пайĕн сведенийĕсем тăрăх, районра тырă вырмалли машинăсем 126, косилкăсем 42, кĕреплеллĕ çавасем 4.518 туса хатĕрленĕ. Вĕсемпе уборкăра малтанхи кунсенчех туллин усă курма тытăннă пулсан, ыраш вырас ĕç районра чылай хăвăртрах малалла кайнă пулĕччĕ. Райçĕрĕç пайĕ уборка ĕçне начар ертсе пырать. Главнăй агроном Лаптев юлташ колхозсем жнейкăсемпе, лобогрейкăсемпе тата кĕреплеллĕ çавасемпе ĕçре мĕнле усă курнине пĕлмест.

Уборкăн малтанхи кунĕсем «Коминтерн», «Искра», «1-ое мая», Молотов ячĕпе тăракан, «3-ья пятилетка» колхозсенче начар иртрĕç. Молотов ячĕпе тăракан колхозра (председателĕ Семенов) чылай колхозниксене ыраш вырма явăçтарман. «Коминтерн» колхозра ĕçлеме пултаракан 285 колхозникрен малтанхи кунсенче ĕçе 150-шĕ çеç тухнă. Крупская ячĕпе тăракан колхозри Н. Кошкин, В. Зайцев юлташсем ертсе пыракан бригадăсенче июлĕн 31-мĕшĕнче 8 çын ĕçе тухман. Вĕсем пурте пекех ачаллă хĕрарăмсем. Апла пулсан та колхоз ачасен яслине уçма васкамасть, пĕрлешӳллĕ столовăй та организацилемен.

«Виççĕмĕш пятилетка» колхозра выльăх-чĕрлĕхсене пăхакан колхозниксем халĕ ĕçрен пушă лараççĕ пулсан та, уйри ĕçе хутшăнман. Пĕрлешӳллĕ столовăйра 3 колхозник ĕçлет. Çăкăр касса пама ятарласах пĕр колхозницăна тăратнă. Вăл куллен тырă вырнă çĕрте хĕрӳллĕн ĕçлеме тивĕçлĕ вăйпитти хĕрарăм.

Шаккăлти «Искра» колхозра (председателĕ Разумов) ĕçе начар тĕрĕс мар организациленĕ. Кунта колхозниксем звеносемпе мар, 30—40 çын ретĕн тăрса ĕçлеççĕ. Ĕçе уйрăммăн шута илсе пымаççĕ.

Ку çитменлĕхсене халех пĕтермелле.

П. НИКОЛАЕВ.
КАНАШ, (Хамăр корр.).

Жнейкăсемпе сменăра 6—7 гектар выраççĕ

ЕЛЧĔК, августăн 2-мĕш. (**Телефонпа**). Районри пур колхозсем те пысăк çĕкленӳпе ыраш выраççĕ. Ĕçре машинăсемпе тата кĕреплеллĕ çавасемпе анлăн усă курма тытăнчĕç.

Ленин ячĕпе тăракан колхоз уборкăна организованно тухрĕ. Ыраша малтанхи кунах жнейкăсемпе хăвăрт вырма тытăннă. 3-мĕш бригадăри машиновед отечественнăй вăрçă участникĕ Афанасьев юлташ уборкăра малтанхи кунах нормăна ирттерсе тултарнă. Пĕр смена хушшинче вăл жнейкăпа 7 гектар ыраш вырчĕ.

Ĕçре çитменлĕхсем те пур. Кашни жнейка патĕнче 30-шар колхозник ĕçлет. Кунта 15—16 çын та ĕçлесе ĕлкĕрме пултарать. Çапла вара, малтанхи кунсенче ĕç вăйне тĕрĕс тата кирлĕ пек вырнаçтарса тухманни курăнать.

«Правда» колхоз кашни колхозникĕн ĕçне уйрăммăн шута илсе пымасть. Колхозниксем звеносемпе ĕçлеççĕ, анчах кунта уйрăм колхозниксем мĕн чухлĕ тата мĕнле пахалăхпа ĕçленине шута илсе пымаççĕ, тунă ĕçĕн результачĕсене колхозниксене çав кунах кăтартса памаççĕ. Колхоз ыраша 600 гектартан 172 гектар вырнă.

Т. МАТВЕЕВ,
ВКП(б) Обкомĕн ялхуçалăх отдел заведующийĕн заместителĕ.

Укçа-тенкĕпе япаласен иккĕмĕш лотерейи

Йĕпреç районĕ юлса пырать

Августăн 3-мĕш тĕлне республикăра укçа-тенкĕпе япаласен иккĕмĕш лотерея билечĕсене пурĕ 14.590.000 тенкĕлĕх вырнаçтарнă. Вăл шутран колхозниксемпе единоличниксем 11.267.000 тенкĕлĕх, рабочисемпе служащисем 3.323.000 тенкĕлĕх çыраннă. Укçине 10.474.000 тенкĕ пухнă.

Лотерея билечĕсене сарас ĕçре Шупашкар хулинчи ĕççыннисем пысăк активлăх кăтартрĕç. Вĕсем 10 кун хушшинче пĕр миллион та икĕ пин тенкĕлĕх çыранчĕç.

Колхозниксемпе единоличниксем билетсене илме çыраннă вăхăтрах укçине те тӳлеççĕ. Калинински, Первомайски тата Шăхасан районĕсенчи колхозниксем çыраннă укçине пĕтĕмпех тӳлесе татнă. Анчах çак ĕç Йĕпреç районĕнче çаплах юлса пырать. Кунта пĕтĕмпе те 295 пин тенкĕлĕх çеç вырнаçтарнă, укçине 170 пин тенкĕ пухнă. Районри партипе совет организацисем тата финанс отделĕ çак ĕç хăй тĕллĕн пулса пырасса шанаççĕ пулас.

Лотерея билечĕсен укçине тӳлеççĕ

СĔНТĔРВĂРРИ. Районри ĕççыннисем хушшинче укçа-тенкĕпе япаласен иккĕмĕш лотерейин билечĕсене 391 пин тенкĕлĕх вырнаçтарнă. Вăл шутран укçине 214 пин тенкĕ пухнă.

Колхозниксем лотерея билечĕсен укçине çине тăрсах тӳлеççĕ. Шуршăл ялсоветĕнчи «Çĕнĕ ял» колхоз членĕсем М. Некрасов 500 тенкĕ, Т. Васильева, Н. Васильев, А. Павлова 300-шер тенкĕ тӳлерĕç.

И. ОСИПОВ.

ЧКАЛОВСКОЕ. Районри колхозниксем укçа-тенкĕпе япаласен çĕнĕ лотерейин билечĕсене пурĕ 377 пин тенкĕлĕх çыранса, укçине те кĕске вăхăтрах тӳлесе татрĕç.

Татмăшри «Восток» колхоз членĕсем лотерея билечĕсене 10 пин тенкĕлĕх çыранчĕç. Çак ĕçре ялсовет секретарĕ В. Дюкин, бригадир П. Антонов юлташсем тăрăшса ĕçлерĕç.

П. СТОЛОВИН.

ПЫСĂК АКТИВЛĂХПА

ВĂРМАР. Çĕнĕ лотерея билечĕсене вырнаçтарас ĕçе Чупай ялсоветĕнчи «Дружба» колхоз членĕсем питех те пысăк активлăхпа ирттерчĕç. Вĕсем билетсене илме пурĕ 40 пин тенкĕлĕх çыранчĕç те укçине те пĕр кун хушшинчех пухса пачĕç. Çак ĕçре колхозри активистсем лайăх пример кăтартрĕç. Колхоз председателĕ И. Григорьев юлташ 600 тенкĕлĕх, парторганизаци секретарĕ В. Тимофеев, ферма заведующийĕ К. Зарубин юлташсем 550-шар тенкĕлĕх, бригадирсенчен Н. Желтухин 500 тенкĕлĕх, А. Васильев 350 тенкĕлĕх, звеноводсем 300-шер тенкĕлĕх çыранчĕç. Колхозниксем те лотерея билечĕсене илме 200 тенкĕрен кая çыранмарĕç.

Х. ТИМОФЕЕВА.

Уборкăри стахановкăсем

ПЕРВОМАЙСКОЕ, августăн 3-мĕш. (**Телефонпа**). Районри колхозсем кĕрхи тырăсене вырма тытăнчĕç. Колхозниксемпе колхозницăсем пысăк хастарлăхпа, ĕç нормисене ирттерсе тултарса ĕçлеççĕ.

Районри «Красный флот» колхозри колхозницăсем кĕреплеллĕ çавапа вырни калама çук пысăк усă панине кăтартрĕç. Кĕреплеллĕ çавапа вырни ĕçе хăвăртлатма пулăшать. Июлĕн 31-мĕшĕнче колхозница Нестерова кĕреплеллĕ çавапа 0,42 гектар тырă вырнă, К. Петрова—0,41 гектар, В. Михайлова—0,37 гектар, Лукьянова колхозница 0,35 гектар вырнă. Çак кун колхозра 30 çын ĕçленĕ, вĕсем пĕтĕмпе 10 гектар тырă вырнă. Çапла вара, кĕреплеллĕ çавапа выракан кашни колхозница çурлапа выракан виçĕ-тăватă колхозник ĕçленинчен ытларах ĕç тăвать.

Ку пример акă мĕн çинчен калать: колхозра ĕç вăйĕ çителĕксĕрри ан сисĕнтĕр тесен, тырпулсене вăхăтра пухса кĕртес тесен, тырă вырас ĕçре кĕреплеллĕ çавасемпе анлăн усă курмалла.

Совет Союзне Бельги посланникĕ г. Роберт Ван де Кершов Д'аллебас килни

Августăн 1-мĕшĕнче Куйбышев хулине Бельгин Совет Союзĕнчи Чрезвычайнăй посланникĕ тата Полномочнăй Министрĕ г. Роберт Ван де Кершов Д'аллебас килнĕ.

Пристань çинче г. Ван де Кершов Д'аллебаса Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссариачĕн Протокольнăй Отделĕн заведующийĕ Ф. Ф. Молочков юлташ кĕтсе илнĕ.

ОТЕЧЕСТВЕННĂЙ АСЛĂ ВĂРÇĂ ФРОНЧĔСЕНЧЕ

Воронежран кăнтăртарахра

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ, (ТАСС спецкорĕ). Фашистсем совет войскисене хирĕç контратакăсем тума хăтланма пăрахмаççĕ. Ĕнер нимĕçсем Воронежран кăнтăртарахра икĕ хут контратака тунă. Красноармеецсем хăйсен позицийĕсене лайăх çирĕплетсе пурса, çав контратакăсене сирсе пăрахнă. Нимĕçсен пехоти совет окопĕсем патне çывăхарсанах пирĕн боецсем вĕсем çине пеме тытăннă. Гитлеровецсем çапăçу хирĕнче хăйсен вилнĕ тата аманнă вуншар салтакĕсене пăрахса хăварса, хаялла çаврăнса кайнă. Икĕ сехетрен, хăйсен йышне ÿстерсен, вĕсем çĕнĕрен атака тунă. Ку шутĕнче противник пирĕн флангсене пырса çапма хăтланнă. Анчах унăн çак маневрне те пирĕннисем вăхăтра пĕлнĕ. Пирĕн чаçсем тăшманăн наступленине вăйлăн хирĕç тăрса сирсе янă. Нимĕçсен атаки каллех пăчланса ларнă.

Совет чаçĕсем гитлеровецсем пырса çапнине сирсе-сирсе ярассĕ çеç мар, вĕсем тата хăйсем те противникăн обороннне савăллана-савăллана кĕрешсĕ. Ĕнер пĕр подразделени, сасартăк пырса тапăнса, нимĕçсен 3 танкне стройран кăларнă, пĕр орудине, 7 пулеметне тата салтакĕсемпе офицерĕсене нумай пĕтерсе тăкнă.

Метеорологи условийĕсем лайăх пулманни ик енĕн авиацине те кĕрешме кансĕрлесе тăнă. Анчах апла пулсан та, совет летчикĕсем, мĕнпур йывăрлăхсене çĕнтерсе, противника туйăнтармаллах сиен кÿнĕ. Летчиксем боеприпассен 3 складне сирпĕнтерсе янă, горючи усракан 2 склада вут тĕртнĕ, минометсен 3 батарейине пусарса лартнă, фашистсен пехотине икĕ ротăна яхăн çапаласа янă, пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

Çапăçусем малалла пыраççĕ.

Г. КРЫЛОВ.

МАННЕРГЕЙМОВЕЦСЕН ТИСКЕР ĔÇĔСЕМ

ЛЕНИНГРАД ФРОНЧĔ, (ТАСС спецкорĕ).

Гитлерăн Финляндири тарçисем тыткăна лекнĕ красноармеецсене тискер хăйăрсем пек хăрушшăн асаплантараççĕ.

Финсен çарĕнчен тыткăна илнĕ салтак Хейки Койвисто çапла каласа панă: «Фронтăн пирĕн патри участокĕнче юлашки вăхăтра тыткăна илнисем тăватă çын пурччĕ, вĕсене малти позицисенче, тепĕр чухне тата окопсенчен те маларахра, снарядсем çурăлнă çĕртех ĕçлеттеретчĕç. Финлянди çарĕн главкомандующийĕ панă приказ тăрăх, вырăссен тыткăна лекнĕ çар çыннисенчен пĕри тарсан, унăн вунă юлташне çийĕнчех персе пăрахмалла тунă. Сирĕн снаряд ванчăкĕсем лекнипе финсен икĕ офицерĕ вилнĕшĕн пирĕн пĕр офицер тыткăна лекнĕ вырăссене 40 çынна персе пăрахма приказ панă».

Райволăра, Финн заливĕ хĕрринчи дачăллă поселок пулнă çĕрте, ишĕлнĕ çуртсем хушшинче белофинсем советăн тыткăна лекнĕ çар çыннисем валли лагерь туса хунă. Куна курнипе юн пăрланса лармалли сценăсем пулса иртеççĕ.

Çавăн çинчен тыткăна лекнĕ финн салтакĕ Рийпонен тĕпĕ-йĕрĕпех каласа панă: «Райволăри тыткăна лекнĕ çар çыннисем — вĕсем çĕтĕк-çурăкпа чĕрне чĕрĕ вилесем. Кăшт айăпа кĕрсенех вĕсене хĕрхенмесĕр патаксемпе хĕнеççĕ. Выçлăхпа кĕн-хура пула халран кайнă çынсем кулленех вилеççĕ. Тыткăна лекнĕ икĕ красноармеец пĕррехинче темĕнле йывăр ĕç ĕçленĕ, вĕсене конвой хураллаca тăнă. Çав красноармеецсем патĕнчен ÿсĕр шюцкоровец иртсе пынă. Вăл тыткăнри çынсене пынă та «У, русс!» тесе кăшкăрса, унăн кăкăрне кинжал тĕрĕнтарнă».

А. КРАШКЕ.

Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăрту

Уйăхри программăна икĕ кун малтан тултарчĕ

ÇЕМĔРЛЕ, августăн 3-мĕш. (Телефонпа, хамăр корр.). Комбинат коллективĕ июль уйăхĕнчи программăна икĕ кун малтан тултарчĕ, çĕршывпа фронта планран ирттерсе продукци пачĕ. Малтанлăха шутласа пăхнă тăрăх, июль уйăхĕнче рабочисен ĕç тухăçлăхĕ планпа палăртнинчен 2 процент ытларах, стахановецсен хисепĕ 10 процента яхăн, двухсотниксемпе трехсотниксен хисепĕ 7,4 процент ÿснĕ, нормăна тултарайманнисен хисепĕ 10 процента яхăн чакнă.

Иртнĕ уйăхри ăмăртура Станюлин юлташăн цехĕ, иккĕмĕш кварталта комбинатăн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне илнĕскер, мала тухнă. Цехри рабочисем пурте нормăна тултарса ĕçлеççĕ. Гржибовский, Бабенкова мастерсен групписем уйăхри заданисене 2 хут ирттерсе тултарнă.

Назаров юлташ ертсе пыракан цех коллективĕ те плана ăнăçлăн тултарнă. Цехра двухсотниксемпе трехсотниксен йышĕ ÿснĕ. Прокопьев, Пантелеймонов, Киселев стахановецсем июльре вăтамран 3-шер норма тултарса ĕçленĕ.

Х. ЛИСИН.

Вагонниксен çĕнĕ çитĕнĕвĕ

КАНАШ, августăн 3-мĕш. (Телефонпа). Сулăмĕр Халăх Комиссариачĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне илнĕ вагонсем юсакан завод вагонсем юсамалли июль уйăхĕнчи плана ытлашшипех тултарчĕ. Завод коллективĕ июль уйăхĕнче çĕршывпа фронта вагонсем июнь уйăхĕнчинчен ытларах пачĕ. Ку тĕлĕшпе уйрăмах Чернухинпа Капелюха юлташсен бригадисем, Рязанцевпа Малеваный юлташсен комплексĕсем пархатарлă ĕçленине палăртмалла. Вĕсем уйăхри заданисене срокчен тата ытлашшипех тултарчĕç.

Июль уйăхĕнчи плана Токарев, Соколовский тата Губский юлташсен спеццехĕсем те ăнăçлăн тултарчĕç.

Августăн иккĕмĕшĕнче çав цехсен коллективĕсем воскресник турĕç. Железнодорожниксен Пĕтĕм Союзри кунне вĕсем завод территорине тасатнипе, тимĕр-тăмăр пухнипе паллă турĕç.

П. КИСЛЕНКО,
Завком председателĕ.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Коммунистсен примерĕ

Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăннă хыççăн пирĕн комбинат коллективĕ лайăхрах ĕçлеме пуçларĕ. Вăл кашни уйăхрах хăйне панă заданисене ирттерсе пурнăçлать, ĕç тухăçлăхĕ те ÿссе пырать. Нумаях пулмасть Наркомат пирĕн коллективăн çитĕнĕвĕсене паллă туса, ăна 100 пин тенкĕ укçа парса премилерĕ.

Производствăра коммунистсем пример кăтартса ĕçлеççĕ. Вĕсем — ăмăрту организаторĕсем. Кулленхи ĕçре çĕнĕрен те çĕнĕ çитĕнÿсем туса, вĕсем ытти рабочисене хăйсем пек ĕçлеме вĕрентеççĕ.

М. Шустин юлташ парторг пулса ĕçлекен цех коллективĕ ăмăртура пĕрремĕш вырăн йышăнса, комбинатăн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне илме тивĕçлĕ пулчĕ. Ку цехра рабочисем пурте пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлеççĕ, хăйсем çине илнĕ обязательствăсене мĕиле пурнăçласа пыни çинчен кашни кунах кăтарту хăми çине çыраççĕ, стена хаçачĕ урлă çутатаççĕ.

Цехра политикăллă-массăллă ĕçе начар мар организациленĕ. Кăнтăрла апат çинĕ вăхăтра агитаторсемпе калаçу ирттерекенсем рабочисене хаçат-журналсем вуласа параççĕ, уйрăм темăсем тăрăх калаçусем ирттереççĕ. Çаксем вара, ĕç тухăçлăхне ÿстерме, панă заказсене вăхăтра пурнăçлама пысăк пулăшу параççĕ. Калас пулать, цехра нормăна тултарса ĕçлейменнисем пĕрре те çук, вĕсенчен çурри ытла стахановецсем. Парторг Шустин юлташ слесарь пулса ĕçлесе куллен нормăна 2 хут ирттерсе тултарать, коммунист столяр И. Бутин юлташ уйрăм кунсенче икшер норма ытла тăвать.

Тепĕр цехра ĕçлекенсем хушшинче те коммунистсем паллă вырăн йышăнса тăраççĕ. Коммунист Г. Димитриев юлташпа виçĕ уйăх каялла çĕнĕ специальноçпа ĕçлеме куçарчĕç. Хастарлă рабочи кĕске вăхăт хушшинчех ĕçĕн технологи процесне вĕренсе çитрĕ. Халĕ вăл куллен нормăна 3 хут, уйрăм кунсенче 6 хут ирттерсе тултарать. Ку çеç те мар, уйрăм заказсене пурнăçланă чухне вăл смени-сменипе цехран тухмасăр ĕçлет. Унпа пĕрле ĕçлекен коммунист П. Самойлов та заданисене яланах 200—300 процент тултарать.

Коммунистсем техникăна хăвăртрах алла илме çамрăк рабочисене пулăшас ĕçе те енлăн туса пыраççĕ. Токарь Н. Сазонов юлташ юлашки вăхăтра кăна темиçе çынна токарь ĕçне вĕрентрĕ. Токарь Н. Корнеев (вăлах цехри профорг) ĕç нормине вăтамран илсен 300 процент ытла тултарать, вăл туса кăларакан продукци яланах отлично пахалăхлă. Çав вăхăтрах Корнеев юлташ чылай рабочисене специальноçсем илме пулăшнă, хальхи вăхăтра тата 2 рабочие токарь пулма вĕрентет.

Производствăн ытти участокĕсенче ĕçлекен коммунистсем те куллен лайăх результатсем кăтартаççĕ. Вĕсем пĕтĕм ĕçе вăрçă вăхăчĕ ыйтнă пек туса пыма тăрăшаççĕ. Смена мастерĕ П. Грачев юлташ социализмлă ăмăртăва лайăх организациленĕ май хăйĕн сменине малти вырăна кăларчĕ. Халĕ смена плана 120 процентран кая мар тултарать. Кунти рабочисем паянхи ĕç результачĕсене ыран ирех пĕлме пултараççĕ.

Çамрăк коммунистка В. Мареева тата М. Подклетнов юлташсем ертсе пыракан сменăсем те начар мар ĕçлеççĕ, кашни кунах хăйсен планĕсене ирттерсе тултараççĕ. Ку сменăсенче кашни рабочипе работница татăклă обязательствăсем илсе ăмăртăва тухнă.

Анчах эпир халиччен тунă çитĕнÿсене çителĕклĕ теме пултараймастпăрха. Паллах, ĕçре çитменлĕхсем те пур. Уйрăмăнах продукци пахалăхне лайăхлатас тĕлĕшпе пирĕн ытларах ĕçлемелле. Уйрăм цехсенче халĕ те нормăна тултарайман рабочисем пур. Пур рабочисене те нормăран ирттерсе ĕçлекен тăвасси, çапла вара хамăра панă государство заданийĕсене яланах срокчен тата пысăк пахалăхпа пурнăçласси — çакă пулать пирĕн умра тăракан тĕп задача.

И. ПОДКЛЕТНОВ.
Çĕмĕрле комбинатĕнчи партбюро секретарĕ.

Колхозсенчи стена хаçачĕсемпе боевой листоксем

Уборкăна хатĕрленес тата ăна нихăçанхинчен те лайăхрах ирттерес ĕçре колхозсенчи стена хаçачĕсем пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ. «Память Ленина» колхозри (Вăрнар районĕ) стена хаçачĕ ку тĕлĕшпе чылай паха ĕçсем турĕ. Хаçат колхозниксен социализмлă ăмăртăвне организацилет, лайăх ĕçлекенсен опычĕсене çутатать, ĕç дисциплинине пăсакансене питлет.

Колхозра 64 çулти стахановец Иван Карпов кулленхи нормăна 200—225 процент тултарса ĕçлет. Унăн паха примерне стена хаçатĕнче çутатса панă. Хаçатра Иван Карповпа танлашма пулнă татах та темиçе колхозникăн обязательствисене çырса кăларнă. Н. Сергеев, Т. Ильин, А. Васильев ватă колхозниксем ĕçкунĕсен минимумĕн пĕррелмĕш срокĕнчи нормине 210—240 процент пурнăçланă.

Утă çулса пуçтарнă вăхăтра К. Николаев бригадир пулса тăракан виççĕмĕш бригадăри «Боевой листок» кашни куллен тухса тăчĕ, ĕçри çитĕнÿсемпе [illegible] вăхăтра палăртса пычĕ. Хаçатра «Хисеп хăми» пур. Унта малта пыракансен паха тĕслĕхĕсене вăхăтра палăртса пынă.

Боевой листок социализмлă ăмăртăвăн организаторĕ пулнине çак тĕслĕхсенчен те курма пулать. Унăн 3-мĕш номерĕнче А. Арсентьевăпа А. Сергеева колхозницăсем ĕçе кая юлса тухни çинчен, вĕсем нормăна пурнăçлайманни çинчен çырнă, вĕсем çинчен 5-мĕш номерте тата тепĕр хутчен çырса кăларнă. Вĕсем нормăна 200-шер процент тултарса ĕçленĕшĕн мухтанă.

Çав вăхăтрах колхозри комсомол организацийĕн «Стахановец» ятлă стена хаçачĕ май уйăхĕнчепе пĕр номер кăна тухнă. Хаçат редакторĕ М. Горшковпа комсомол организацийĕн секретарĕ А. Тарасов юлташсем хаçат ĕçне лайăхлатма тăрăшмаççĕ.

Çĕнĕ Алтăшри «Волга» колхозри «Пурте фронтшăн!» ятлă стена хаçачĕ (редакторĕ Л. Порфирьев) çураки ирттернипе пĕр номер та тухман.

Колхозри парторганизацисен паха тивĕçĕсенчен пĕри вăл—стена хаçачĕсене ертсе пырасси пулмалла. Çак тĕлĕшпе кунта ĕç аван пымалла пек, анчах кунти коммунистсем çак ĕç çинчен пачах манса кайнă.

Çакнашкал тĕслĕхсене Кăмаша, Упнер, Кюстюмер колхозĕсенче те курма пулать. Кюстюмерти Крупская ячĕпе тăракан колхозри «Радио» стена хаçачĕ тахçантанпах тухмасть.

Партипе правительствăн директивисене вăхăтра пурнăçа кĕртсе пырас ĕçре, колхозниксен пĕтĕм массине юнлă гитлеровецсене хирĕç кĕрешме мобилизацилес тĕлĕшпе стена хаçачĕсем калама çук пысăк ĕç тума пултараççĕ. Кĕçĕн Кипекри «Память Ленина» колхозри виççĕмĕш бригадăри «Боевой листокра» (редакторĕ В. Алексеев) «Фронта эсĕ мĕнпе пулăшрăн»? ятлă отдел организациленĕ. Унта кашни номертех колхозниксем фронта мĕнле пулăшни çинчен çырнă статьясем тухаççĕ.

«Эпĕ,—тет листокăн 4-мĕш номерĕнче М. Зябликова колхозница,—хамăн упăшкана фронта ăсатни сакăр уйăх çитет. Вăл нимĕç фашисчĕсене хирĕç паттăррăн çапăçать. Вăл кăçал иртнĕ çулхи пек манпа пĕрле ĕçлеймест. Анчах эпĕ уншăн та ĕçлесе пыратăп. Ку ман чуна лăплантармасть-ха. Манăн фронта тата ытларах пулăшас килет. Эпĕ халĕ боецсем валли пĕрер мăшăр çăм чăлхапа алшиш çыхрăм».

Листок пулăшнипе колхозра ăшă тумтирсем пухас ĕçе лайăх йĕркеленĕ.

Листок пуçарнипе колхозниксенчен нумайĕшĕ Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли хăйсен анкартийĕсенче уйрăм йăрансем çинче пахча-çимĕçсем ÿстереççĕ, государство умĕнчи парăмсене вăхăтра парса татаççĕ.

Т. СЕЛЕЗНЕВА.

Ют çĕршывсенче

Иккĕмĕш фронта хăвăртрах уçассишĕн Англире пыракан движени

ЛОНДОН, июлĕн 30-мĕш. (ТАСС). Англири общественность тата нумай хаçатсем Европăра хăвăртрах иккĕмĕш фронт туса хума ыйтса тухса калаççĕ. Çак кунсенче Лондонри Трафальгар Скверта 70.000 çынлă митинг пулса иртнĕ. Митинг Европăра иккĕмĕш фронт уçассине васкатма ыйтнă. Митингра горняксен нацилле федерацин председателĕ Лоутер, парламент членĕ—либерал Робертс, лейборист Притт, Гарри Поллит тата ыттисем те тухса каланă. Ораторсем çакна çирĕплетсе панă: иккĕмĕш фронта уçни Совет Союзне пулăшни кăна мар, вăл Англи пурнăçне хÿтĕленĕ çĕрте питех те кирлĕ ĕç тата çĕнтерÿ патне çитмелли пĕртен пĕр çул пулса тăрать, тенĕ. Митингра тухса каланă Канада салтакĕ: хăй, иккĕмĕш фронт уçассине фашизма хăвăртрах çапса аркатмалли пĕртен пĕр тивĕçлĕ май вырăнне шутласа, ытти мĕнпур салтаксем пекех, иккĕмĕш фронт уçассине тÿсеймесĕр кĕтсе тăни çинчен пĕлтернĕ. Работница Матнилвен хăйĕн выступленийĕнче хăй вăл 13.000 хĕрарăм ĕçлекен заводра ĕçлени çинчен пĕлтернĕ. Хĕвеланăçĕнче иккĕмĕш фронт туса хурас ятпа кирек мĕнле жертвăсем те тÿссе ирттерме хатĕр тăни çинчен çав хĕрарăмсем пурте пĕр шухăш-кăмăллă пулса пĕлтереççĕ. Митинг председателĕ резолюци вуласа панă, пĕтĕм митинг вара çав резолюцие председатель вуланă май хыçран каласа пынă. Резолюцире иккĕмĕш фронта халех уçма ыйтнă тата хăйсен вăйĕсене хĕрхенмесĕр ĕçлеме, геройла совет халăхĕн примерĕ тăрăх кирек мĕнле жертвăсем те тÿссе ирттермешкĕн хатĕр тăма сăмах панă. «Гитлерăн çарĕсене Хĕвеланăçĕнче халех пырса çапар!»—тенĕ юлашкинчен митингра йышăннă резолюцире.

Июлĕн 27-мĕшĕнче Лондонра тухса каланă лейбористсен деятелĕ Страболджи çапла пĕлтернĕ: «Халĕ Российăн кăнтăр енче вăрçăн чи çивчĕ тапхăрĕ çитнĕ чухне, пирĕн Гитлера Хĕвеланăçĕнчен пырса çапмалла, Европăра пĕр тĕлте е темиçе тĕлте çĕнĕ фронтсем уçмалла, унсăрăн эпир халь пулса тăнă пысăк майсене çухататпăр, Гитлер англичансемпе американецсем вăрахăнрах та асăрханарах ĕçленипе усă курса юлма шутлать, вăл оккупациленĕ территорисене тата Германие хăйне те пушатрĕ, унта вăл питех те сахал войскăсем хăварчĕ».

Парламент членĕ Хорабин либерал хăйĕн суйлавçисен пухăвĕнче иккĕмĕш фронта хăвăртрах уçма ыйтса сăмах тухса каланă.

Халĕ, Англие хирĕç Германин Европăра тăракан иккĕмĕш сортлă е виççĕмĕш сортлă дивизийĕсем кăна тухма пултарнă обстановкăра, иккĕмĕш фронт уçмалли чи ăнăçлă самант пулса тăнине кăтартса парса, Хорабин çакна палăртнă: çав задачăна 1943 е 1944 çула хăварса пурнăça кĕртесси пысăк йывăрлăхсемпе çыхăннă пулĕччĕ, тенĕ. Иккĕмĕш фронта хăвăртрах уçма англичансен суднăсем çитмеççĕ тесе калакан шухăша Хорабин çивĕччĕн критикăланă. Вăл халĕ те Лойд Джордж 1918 çулта тунă пекех тума ыйтнă. Ун чухне Лойд Джордж продовольстви турттаракан суднăсемпе салтаксене куçарнă çĕрте усă курнăччĕ. Çакă вăл пысăк хăюлăхпа тунă ĕç,—тенĕ Хорабин,—анчах çакă вăл хăйне тÿрре кăларчĕ.

«Нью Кроникл» хаçатăн политикăллă ĕçсене пăхса тăраканĕ Каммингс çапла çырать: «Англире эпир питĕ пысăк çар тытатпăр, вăл кунсерен Америка войскисен çĕнĕрен те çĕнĕ йышĕсемпе тулса пырать. Çав питех те пысăк вăрçă машини, 1940 çулти июнь уйăхĕнчен пуçласа хăйĕн речĕсене йĕркелесе пыраканскер, тăтăшах хĕçпăшалланса тата сарăлса пыраканскер, нимĕçсем хăйсен оккупациллĕ вăйĕсене хăйсемшĕн хăрушлăх кÿрекен виçене çитиех пĕчĕклетсе пынă вăхăтра, хăйсен мĕнпур ресурсĕсене пĕр задачăна—Российăна çапса аркатас задачăна пурнăçа кĕртме пухса тăратнă вăхăтра, кĕрешмесĕр пурăннине ĕненмелле те мар пек. Халĕ ĕнтĕ, Англин официальнăй представителĕсем калашле, кĕрешĕве тухма «халăх хăй чĕннинчен» нимĕн тĕлĕнмелли те çук». «Темĕн пек хăрушă пулсан та, задача темĕн пек йывăр пулсан та,—тесе çырать Каммингс,—ăна хăвăртрах пурнăça кĕртмелле, мĕншĕн тесен урăхла тума май та çук».

Америка общественноçĕ иккĕмĕш фронта хăвăртрах уçассишĕн

НЬЮ-ЙОРК, июлĕн 29-мĕш. (ТАСС). Çак кунсенче Нью-Йоркри Мэдисон Сквер Гарден ятлă чи пысăк залра Нью-Йоркри производствăллă профсоюзсен конгресĕ пухнă массăллă митинг пулса иртнĕ. Митингра 35.000 çын ытла пулнă. Митинг участникĕсем Европăра хăвăртрах иккĕмĕш фронт уçма ыйтнă. Митинг—«иккĕмĕш фронта халех уçас ĕçре президента пур енчен те пулăшса пымалла» текен лозунгпа пулса иртнĕ. Митингра сенатор-демократсем Мид тата Пеппер, моряксен профсоюзĕн председателĕ Кэрен, Нью-Йорк хулин мэрĕ Ла Гарди, паллă киноактер Чарли Чаплин тата ыттисем те тухса каланă. Митинг участникĕсем Рузвельт патне телеграмма янă. Телеграммăра иккĕмĕш фронта хăвăртрах уçма кирлĕ кирек мĕнле жертвăна та тÿссе ирттерме хатĕр тăни çинчен каланă. «Эпир,—тенĕ митингăн резолюцийĕнче, — пораженецсемпе сутăнчăксене, пирĕн хĕçпăшаллă паттăр вăйсене хирĕç вăрттăн агитацилекенскерсене, питлетпĕр. Эпир халех иккĕмĕш фронт уçма чĕнетпĕр».

Палатăн Пенсильвани штатĕнчен суйланă членĕ демократ Голланд, июлĕн 27-мĕшĕнче представительсен палатинче тухса каласа, иккĕмĕш фронта халех уçма çине тăрсах ыйтнă. Америка халăхĕ, Англи халăхĕ пекех, пĕтĕмĕшпех кĕрешĕве тухассишĕн тăрать, тенĕ Голланд. «Америкăн Мускаври корреспонденчĕсем пурте,—тенĕ Голланд,—пире çапла пĕлтереççĕ: вырăс халăхĕ пирĕнтен часах пулăшу илессине кĕтсе, эпир Гитлера Хĕвеланăçĕнчен пырса çапассине шанса, фашистсен хĕçпăшаллă вăйĕсене пайăн-пайăн татса уйăрассине тата çапла вара Хĕвелтухăçĕнче те, Хĕвеланăçĕнче те татăклă наступлени тума май туса парассине шанса, çакă вăл фашистсене çапса аркатас ĕçе çывхартассине шанса, хăйĕн хĕçпăшаллă кĕрешĕвне малалла туса пырать. Вырăссен паттăр çарĕсем 13 уйăх хушши ĕнтĕ Гитлерăн çар машинин мĕнпур вăй-хăватне хирĕç хăватлăн тăрса кĕрешеççĕ. Вĕсем халиччен пулман паттăрлăхпа çирĕплĕх кăтартса çапăçаççĕ, анчах вĕсем пĕччен».

«Эпĕ хамăн суйлавçăсем шанса тăнине каласа паратăп, çакă вăл пĕтĕм халăхăн шанчăкĕ пулса тăнине, Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсем вăрçăри кризиса американецсене тивĕçлĕ хăюлăхпа, ăсталăхпа тата паттăрлăхпа кĕтсе илессине эпĕ ĕненетĕп!»,—тенĕ Голланд.

«Вашингтон пост» хаçат курăнмалла вырăнта умстатья пичетлесе кăларнă. Унта вăл Германие хирĕç халех татăклă кĕрешĕве тухма чĕнет. Хаçат Нельсон адмиралăн лозунгне—«чи хăюллă мерăсем—чи хăрушсăртараххисем пулса тăраççĕ» текен лозунга аса илтерет. «Хальхи вăхăтра стратегие чи хăюллă çынсем кăна ертсе пымалла,—тет хаçат.—Англипе Америка халăхĕсем иккĕмĕш фронт уçма ыйтаççĕ. Халăх, тен, стратегие ăнлансах çитерейместь пулĕ, анчах хакла ларакан иккĕмĕш фронт, эпир кĕтсе тăнине пула килсе тухма пултаракан хăрушла çапăçупа танлаштарсан, нимĕн те маррине вăл лайăх пĕлет. Англипе Америка халăхĕсем кĕрешме ыйтаççĕ, мĕншĕн тесен вĕсем туяççĕ тата çак туйăм майлă нумай экспертсем тăраççĕ: сывлăшри тата тинĕсри çар хăвачĕсем пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ пулсан та, татăклă çĕнтерĕве тип çĕр çинче, çапăçу хирĕнче кăна тума пулать. Эпир юлашки салтакăн мундирĕ çинчи юлашки тÿммене тÿммеличчен кĕтсе тăма пултараймастпăр. Çапăçу хирĕнче Гитлерăн мĕнпур çарĕпе тĕл пуличчен, ун çине халĕ, вăл Российăра çапăçнă вăхăтра, пырса тапăнмалла». Юлашкинчен хаçат çапла çырать: «Вăхăт нихăçан та нейтральнăй пулмасть. Вăхăт яланах унпа усă куракан çар енче тăрса çапăçать».

Лавалĕн администрацилле-полицилле ĕçĕсем

ЛОНДОН, августăн 2-мĕш. (ТАСС). «Дейли экспресс» хаçат çапла пĕлтерет: Лаваль промышленноçлă Париж районĕнчи рабочисем саботаж тунипе тата вĕсем оккупациллĕ влаçсемпе Вишин вырăнти влаçĕсене хирĕç тăнипе питĕ пăшăрханать. Лаваль çав районра Гитлера хирĕçле юхăма пусарса лартмашкăн çĕнĕ васкавлă ĕçсем тума хатĕрленет.

Лаваль Парижра юлашки хут пулнă чухне вăл унта хăйĕн помощникĕсемпе канашлу туса ирттернĕ. Çав канашлура профсоюзсен халлĕхе тăрса юлнă организацийĕсен руководителĕсем хушшинче, француз рабочийĕсене Германие яма килĕшмекенскерсем хушшинче, «тасату» туса ирттерме йышăннă. Промышленность производствин ыйтăвĕсем тĕлĕшпе ĕçлекен генеральнăй секретаре Бишлона Париж районĕнчи «ытлашши» предприятисене хăй хупас, тенисене хупма хушнă; вĕсене ĕççĕррисен шутне ÿстермешкĕн тата çав ĕççĕр юлнă çынсене кайран Германие кайма хушмашкăн хупаççĕ. Ĕççĕррисем Германие кайма килĕшмесен, вĕсенчен продовольстви карточкисене тытса илеççĕ.

Лилльре тата Францин оккупациленĕ зонинчи промышленноçлă ытти районĕсенче те çавăн пекех тăваççĕ.

Совет Союзĕпе Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсем хушшинчи суту-илÿ килĕшĕвĕн срокне тăсни

Июлĕн 31-мĕшĕнче Вашингтонра Совет Союзĕн Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсенчи Чрезвычайнăй тата полномочнăй посолĕ М. М. Литвинов тата Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен Государственнăй Секретарĕ г. Корделл Хэлл пĕр-пĕрин патне Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсемпе Совет Союзĕ хушшинче суту-илÿ тĕлĕшпе тунă килĕшĕвĕн срокне тăсни çинчен калакан нотăсем янă. Çак килĕшÿ вăл икĕ çĕршыв хушшинчи суту-илÿ çыхăнăвĕсене пĕр-пĕрине лайăхрах условисем туса парас принципа йĕркелесе тăрать; вăл килĕшĕве 1937 çулта тунă, ăна ун хыççăнхи тăватă çул хушшинче вара çуллен пĕрер çуллăха тăсса пынă. Хальхи вăхăтра Совет Союзĕн правительствипе Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен правительстви çав килĕшĕвĕн срокне 1943 çулти августăн 6-мĕшчен тăснă тата пĕр-пĕринпе çакăн пирки калаçса татăлнă: çак килĕшĕве пĕтересси çинчен унăн срокĕ тухиччен 6 уйăх малтан пĕлтерсе хурса ун вырăнне анлăрах суту-илÿ килĕшĕвĕ тумасассăн, çак килĕшÿ вăл малта кăтартнă срок хыççăн та законлă пулса тăрать.

М. М. Литвиновпа г. Корделл Хэлл пĕр-пĕрин патне пĕр пекех çырса янă нотăсенче çапла каланă:

«Пирĕн хушăра пынă калаçусем тăрăх, эпĕ Сире хамăн правительство ячĕпе пирĕн çĕршывсен правительствисем пĕр-пĕринпе çакăн пирки калаçса татăлнине çирĕплетсе паратăп: Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕ тата Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсем хушшинчи суту-илÿ çыхăнăвĕсем тĕлĕшпе тунă килĕшÿ, 1937 çулти августăн 4-мĕшĕнче улăштарса илнĕ нотăсенче каласа панăскер, 1937 çулти августăн 6-мĕшĕнче вăя кĕнĕскер тата 1938 çулти августăн 5-мĕшĕнче, 1939 çулти августăн 2-мĕшĕнче, 1940 çулти августăн 6-мĕшĕнче тата 1941 çулти августăн 2-мĕшĕнче кашнинче тепĕр сроклăха тăсса пынăскер, 1943 çулти августăн 6-мĕшĕччен пырать.

Çак килĕшÿ вырăнне анлăрах суту-илÿ килĕшĕвĕ тумасассăн, вăл çав кăтартнă срок хыççăн та законлă пулать; икĕ правительствăран пĕри çак килĕшĕве пĕтерессси çинчен унăн срокĕ тухиччен 6 уйăх малтан çырса пĕлтернĕ хыççăн вăл вăйран тухать.

Çак килĕшĕве Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çирĕплетет тата вăл килĕшÿ çинчен Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен Президенчĕ чăплăн каласа пĕлтерет».

Совет Союзĕпе Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсем хушшинчи Суту-илÿ Килĕшĕвĕн срокне тăсни çинчен

ВАШИНГТОН, августăн 1-мĕш. (ТАСС). Совет Союзĕпе США хушшинчи Суту-илÿ Килĕшĕвĕн срокне тăсасси çинчен Литвинов юлташпа Хэлл господин пĕр-пĕрин патне нотăсем яни çинчен Государственнăй департамент хăйĕн пĕлтерĕвĕнче çапла калать: суту-илÿ тĕлĕшпе анлăрах килĕшÿ тумасассăн, çак Килĕшÿ çулталăк иртсен те законлă пулса тăрать, тет. «Килес çул Америкăпа Совет Союзĕ хушшинчи суту-илĕвĕн характерĕпе пысăкĕшĕ ахаль чухнехи шухăшсемпе тĕллевсенчен мар, вĕсем чылай енчен США-па Совет Союзĕн тата ытти çĕршывсен, агрессиллĕ çăткăн вăйсене хирĕç кĕрешекенскерсен, çар потребноçĕсенчен килсе тăрĕ тесе шухăшлаççĕ пулин те, пĕр-пĕрин патне çав нотăсене яни Совет Союзĕпе пирĕн хушăра пуçласа янă суту-илÿ çыхăнăвĕсене çак чрезвычайнăй тапхăр пĕтиччен 1937 çулти суту-илÿ килĕшĕвĕ тăрăх туса пыма май парать», тенĕ çав пĕлтерÿре.

Англипе Германи хушшинчи сывлăшри вăрçă

ЛОНДОН, августăн 2-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Англи бомбардировщикĕсем пĕр кун хушшинче Ганноверти, Вильгельмсхафенри тата Франкфуртри пĕрлĕ объектсем çине вĕçсе пырса тапăннă.

АНГЛИ АВИАЦИЙĔ ДЮССЕЛЬДОРФ ÇИНЕ ПЫРСА ТАПĂННИ ÇИНЧЕН ТĔПЛĔН ПĔЛТЕРНИ

ЛОНДОН, августăн 1-мĕш. (ТАСС). Авиаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, Англи авиацийĕ юлашки вăхăтра усă курнă бомбардировщиксен соединенийĕсенчен Дюссельдорф çине чи пысăк соединени пырса тапăннă. Çакăнпа пĕр вăхăтрах Англи самолечĕсем Голландири аэродромсене тата Францин çурçĕр пайĕнчи чугунçул объекчĕсене атакăланă. Çав операцисенчен 31 самолет хăйсен базисене таврăнман.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн — 4—26, пропогандăпа парти пурнăç пайĕн — 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

Типография №1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР, Заказ № 2. Ф б. 58 84 п. л.

ЛТ 225